VI-159
3490



# ПАТТĂРСЕМ

Чувашская
Книжная палата
Чувашской АССР



ЧĂВАШГОСИЗДАТ
1941



3490

# ПАТТĂРСЕМ

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂРИ
ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ЫВĂЛĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

## УМСĂМАХ

Аслă отечественнăй вăрçă куллен-кун геройсем çуратса пырать. Вăл геройсем — Октябрь революцийĕ пĕрлештернĕ тăванлă халăхсен ывăлĕсем. Вăл геройсем хушшинче чăваш халăхĕн маттур ывăлĕсем те сахал мар.

Вĕсен пурин те пĕр ĕмĕт, пĕр тĕллев: иртĕхсе кайнă фашистсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкасси.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем çинчен—боецсемпе командирсем çинчен, комиссарсемпе политработниксем çинчен вырăсла та, чăвашла та хаçатсенче сахал мар очерксем, калавсем пичетленсе тухрĕç.

Эпир çав очерксемпе калавсене пĕр çĕре пухса уйрăм кĕнеке туса кăларатпăр. Калавсемпе очерксемсĕр пуçне ку кĕнекене действующи арминчен килнĕ çырусем те кĕчĕç. Эпир çак кĕнекене кашни вулаканах пысăк интереспа вуласа тухĕ тесе шанатпăр.

*Редактор.*

# СТАРШИЙ ПОЛИТРУК ПАВЛОВ

Дивизи политотделĕ ун ҫинчен ҫапла пĕлтернĕ: „Саперсен уйрăм батальонĕн ҫар комиссарĕ—старший политрук Павлов хăюллăн та паттăрăн ҫапăҫнă. Вăл чи малти лининче пулса хăйĕн примерĕпе боецсемпе командирсене хавхалантарса пынă. Тăшман пульли батальон командирне вĕлерсен, Павлов батальона ертсе пырас ĕҫе хăй ҫине илнĕ. „Юратнă командира вĕлернĕшĕн фашистсене тавăрар!“ тесе хыттăн кăшкăрса, вăл пуринчен малтан тăшман ҫине ыткăннă. Ун хыҫҫăн пĕтĕм батальон атакăна кĕрсе кайнă. Пульăсем шăхăртса, гранатăсемпе персе, штыксемпе чиксе, боецсем тăшмана пĕтерсе тăкнă“.

... Акă ĕнтĕ эпир ҫав Павловпа тĕл пултăмăр. Лăпкă, сăмах ваклама юратман ҫын. Тĕсрен хăй тĕксĕмрех, уҫă мар ҫын пек курăнать. Сăнран пăхсан хăйне никам та герой тесе калас ҫук ĕнтĕ. Унпа калаҫас тесе те чылай вăхăт хушши тертленме тиврĕ мана.

— Темĕскерех туман, мĕн ҫинчен каласа парас-ха.

— Манăн интереслă япала нимех те çук. Сире вĕт мĕнле те пулсан интереслă, вулама кăмăллă япала кирлĕ.

Вăл çакна мухтанса мар, çук, пĕтĕм чĕререн калать.

— Кунта пур ак пирĕн паттăрсем. Вĕсем çинчен иçмасса çырсан та пырать. Сăмахран...

Вăл пĕр хушамат хыççăн тепĕр хушамат тупать. Хăй батальонĕнчи е кӳршĕ чаçсенчи çынсен ячĕсене: чĕррисен ячĕсене те, паттăр вилĕмпе вилнисен ячĕсене те асăнать. Хăй çинчен сăвар та уçасшăн мар. Ну, тетĕп, кунран хăйĕн çинчен нимĕн те ыйтса пĕлме пулмасть пулĕ, тетĕп. Ыйтма пуçлатăп çеç, вăл каллех, мана хĕрхеннĕ пек пулса, çапла калать:

— Çук çав,—тет,—хам çинчен каласа памалли манăн нимех те çук çав, — тет. — Эпĕ хама сирĕнтен лайăхрах пĕлетĕп ĕнтĕ,—тет.

Çапла вара, пирĕн калаçасси пулмарĕ. Тĕрĕсрех каласан: эпĕ калаçаймасăрах юлма пултарнă. Старший политрук темле распоряженисем пама тухса кайрĕ. Батальон çĕнĕ боевой задани илчĕ, ăна пурнăçа кĕртме хатĕрленмелле пулнă.

Каçхине эпир каллех тĕл пултăмăр. Комиссар политотдела саперсене тав тумалли листсене илсе пынă пулнă. Вăл çырса хатĕрленĕ характеристикăсене сасăпах вуласа пачĕ. Эпĕ çав характеристикăсем питĕ тĕрĕс те çыхăнуллă пулнине асăрхарăм. Çавăн пек лайăх çырас тесен çынсене тĕплĕн пĕлни кирлĕ.

Павлов тухса кайма тытăнсан, эпĕ унран:

— Характеристикăсене кам çырнă? — тесе ыйтрăм.

— Эпĕ, — терĕ вăл.

— Вĕсене çав тери тĕплĕн тата лайăх çырнă, эсир литературăна юратакан çын пулас.

Старший политрук вăтаннă пек пулчĕ те йăлл кулса илчĕ, унăн сăн-пичĕ çуталса кайрĕ, вăл халĕ ĕнтĕ пачах урăхла, чĕрĕрех те ăшăрах курăнма тытăнчĕ.

— Эсир тĕрĕс каларăр, — тавăрчĕ вăл. — Лайăх кĕнеке — пысăк савăнăç.

Эпир иксĕмĕр те пĕр чĕлхе тупрăмăр. Иксĕмĕр те хамăр юратакан Михаил Александрович Шолохов çинчен, тата ытти, хамăра çывăх писательсем çырнă кĕнекесем çинчен калаçма тытăнтăмăр.

Украина ялĕ, лăпкă каç. Пĕлĕт тап-таса. Хуркайăк çулĕ тĕтрелле юханшыв пек курăнса выртать. Шухăшлатăн та, вăрçă таçта аякра пынă пек туйăнать. Боецсем айĕсене сарса выртма утă çĕклесе килеççĕ. Эпир урамалла тухрăмăр, пукан тупрăмăр та ун çине лартăмăр.

Халь ĕнтĕ эпĕ Павловран ним çинчен те ыйтмарăм. Вăл хăй сăмах пуçларĕ.

— Çапла ĕнтĕ, эпĕ сире парăма кĕнĕ çын пулас-ха.

— Мĕншĕн?

— Ара, эсир манран мĕн чухлĕ тĕпчетĕр, а манăн — хама та намăс — каласа памалли нимех

те çук. Çапла ĕнтĕ, маншăн эсир вăхăтăра сая турăр пулать.

— Мĕншĕн-ха сая тунă пулать. Эсир мана каласа памалли нимех те çук тетĕр, эсир хăвăр курса тӳснисене хăвăра çеç тивеççĕ тесе шутлатăр пулас. Вĕсем пурне те тивеççĕ: мана та, сире те, хăть вĕсем пĕчĕккĕ пулччĕр, хăть пысăк пулччĕр.

— Тĕлĕнтермеллиех çук çав,— терĕ Павлов.

— Темле-ха. Тата çакă та пур: пысăкки пĕчĕккинчен çуралать.

— Апла, интереслĕ мар япала та кирлĕ пулма пултарать?— ыйтрĕ Павлов.

— Çапла, интереслĕ мар япала та интереслĕ пулса тăма пултарать,— терĕм эпĕ ăна.

Эпир иксĕмĕр те çăлтăрсем çине пăхса тăтăмăр. Çак минутра Павлов умне асаилĕвĕн йывăр çулĕ тухса тăчĕ пулмалла, вăл ерипен, хумханмасăр калаçма тытăнчĕ.

— Эпĕ — чăваш,— пуçларĕ вăл.— Çуралсса та чăваш республикинчех, Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкас ялĕнче çуралнă. Пирĕн çемье чухăн хресчен çемьи пулнă. Эпир 5 ывăлччĕ. Аслă аппа чахотка чирĕпе вилчĕ, анне те—çав чирпех.

— Вуникĕ çула çитсен, мана татăк çăкăр шыраса, Атăл тăрăхĕнчи хуласем тăрăх çӳреме тиврĕ. Хамăн чăтма çук вĕренес килетчĕ. Кашни çĕнĕ кĕнеке — пысăк савăнăçчĕ. Уйрăмăнах маншăн Горький çырăх пулса тăчĕ. Вăл пуринчен те ăнланмаллараххчĕ. Унăн кĕнекисем шанчăклăх пачĕç, хамăн вăйăма туйса илме пулăшрĕç.

— Вырăс чĕлхине эпĕ Хĕрлĕ Çарта тĕплĕн вĕренсе çитрĕм. Хĕрлĕ Çар ретне 1919-мĕш çулта тăтăм. Вăл манăн тăван кил тата тăван çемье пулса тăчĕ. Унпа пĕрле эпĕ Врангеле хирĕç çапăçнă çĕрте те, Туркестан фронтĕнче те пултăм.

— Владимир Ильич Ленин вилсен, эпĕ большевиксен партин ретне кĕтĕм.

— Хăвăрах куратăр ĕнтĕ, çĕнни, çынсенчен уйрăмми нимех те çук. Ман пеккисене пирĕн çĕршывра шутласа та кăларас çук.

Старший политрук калаçма чарăнчĕ. Калăн: вăл хăйĕн сăмах йĕрне çухатрĕ, шырарĕ ăна, тупаймарĕ, тейĕн.

— Чăнах та, çаксем пурте яланхи пекех тата пуринни пекех,—терĕм эпĕ ăна. — Анчах та ку эсир вăйсăррине мар, эсир вăйлине çеç пĕлтерет. Сирĕн пек çынсем нумай, çав лайăх та. Сирĕн пек çынсем Г. станци патĕнчи çапăçура та нумай пулчĕç, ун чухне сирĕн чаçăрсем тăшман кăшăлне татса тухрĕç.

Çав çапăçура сапернăй батальон мухтава тухрĕ. Çавăнта ĕнтĕ командира—капитан Гамзана вĕлернĕ. Вĕсем Павловпа иккĕшĕ туслă пулнă.

— Эпир пĕр-пĕрне куçран пăхсанах ăнланаттăмăрччĕ,—терĕ Павлов, ассăн сывласа илсе.— Задани илетчĕ те, план туса çынсене вырнаçтарса тухатчĕ, унтан ăна пурнăçа кўртетчĕ. Кăмăллă, кашни боеца пĕлсе хисеплекен çирĕп командирччĕ. Çынсене витĕр пĕлетчĕ, кашнине

асёнче тытатчӗ, кашнинщён тӑрӑшатчӗ. Çын çапӑçӑва кӗме хатӗр-и? Хатӗрленсе çитнӗ-и?— пурне те шута илетчӗ.

Пире тӑшмана хирӗç атакӑна тухма, тӑшманӑн тӗп вӑйне çавӑрса илсе, ӑна аркатса тӑкма приказ пачӗç. Тӑшман ункине татса, пирӗн хамӑр чаççене тухма çул уçмалла пулнӑ.

Çапӑçӑва кӗрес умӗн эпир капитанпа калаçса килӗшрӗмӗр: пӗтӗм комсостав хӑйӗн вырӑнӗнче пулмалла, урӑхла каласан—подразделенисен умӗнче. Задачӑсене ӑнлантарса патӑмӑр. Хӑраса тӑма пултаракан çынсене пурне те хамӑр пата чӗнтӗмӗр.

Капитан вилӗмрен хӑраса тӑмастчӗ. Тӑшмана курайманлӑхӗ унӑн вилӗмрен те вӑйлӑрах пулнӑ.

Çапӑçӑва эпир çӗрле, ак çакӑн пек вӑхӑтра, кӗтӗмӗр. Тӑшман патне 150 метра яхӑн çывхарса пытӑмӑр. Нимӗçсем сӑрт тӑррине окопсем туса вырнаçнӑ. Вӗсем пӑшалсемпе пулеметсенчен, минометсенчен тата артиллерирен вӑйлӑн пеме тытӑнчӗç. Вӗсем çутӑлса вӗçекен тата çурӑлса каякан пульӑсемпе печӗç. Хӑратасшӑн пулчӗç ӗнтӗ. Пӗтӗм пӗлӗт вутлӑ йӗрсемпе витӗнчӗ. Эпир çав хӑрушӑ вут çӗре тӑкӑннине куртӑмӑр.

Пиртен сулахай енче пӗр полкӑн противотанковӑй батарейи куçса пычӗ. Вӑл картах туртӑнса илчӗ те каялла чакма тытӑнчӗ. Эпӗ ун патне чупса çитрӗм.

Батарея чарӑнчӗ. Вӑл хатӗрленчӗ те тӑшмансене çунтарма тытӑнчӗ.

Пирĕн батальона выртма лекрĕ. Капитан Гамза тата партбюро секретарĕ Ральченко та пирĕн çывăхрах, çул хĕрринчи канаврах, выртаççĕ иккен. Посыльнăй пырса çитрĕ, вăл соединени командирĕн приказне пачĕ. Пирĕн фашистсене сăрт çийĕнчен хăваласа ямалла. Пире пулăшма икĕ броневик янă.

Броневиксем çапăçăва кĕме çеç тăнăччĕ, броняна çĕмĕрекен зажигательнăй пульăсемпе персе, вĕсене тивертсе те ячĕç. Паллах ĕнтĕ, пире, броневиксем çумĕнче тăракансене, вĕсемсĕр питĕ йывăр пулчĕ. Вут çулăмĕн çути хамăр çине ӳкет, а пăрăнма май çук.

Пире тымар янă пекех выртма тиврĕ. Пирĕн пулеметсем питĕ тĕл печĕç, анчах противотанковăй орудисем темшĕн шарлами пулчĕç. Вĕсемпе çыхăнма хăтланса пăхрăмăр. Ĕç тухмарĕ.

Тăшман татах та вăйлăрах пеме тытăнчĕ. Çав тери тискер. Пĕтĕм пĕлĕт айăн-çийĕн пăтранать. Çĕр пайлана-пайлана сирпĕнет. Нервăсем туртăнса хытса тăраççĕ. Батальон атакăна кĕме команда парасса кĕтет.

Çав вăхăтра мана:

— Комиссар юлташ, Гамза капитана вĕлернĕ,—тесе пĕлтерчĕç.

— Тен суранланнă пулĕ?

— Çук, вилнĕ.

— Ăçта вăл?

— Ăна çапăçу хирĕнчен илсе тухнă ĕнтĕ.

— Капитан Гамзана вĕлернĕ... Çак сăмахсем аслатирен те хытăрах пырса çапрĕç.

Вăл хыпар пĕтĕм батальон тăрăх сарăлчĕ.

— Пĕрремĕш рота командирне амантрĕç. Сержанта амантрĕç. Кĕçĕн политрука амантнă.

Унтан эпĕ сиксе тăтăм.

— Капитан Гамза вилчĕ. Юратнă командира вĕлернĕшĕн çĕлен-калта фашистсене тавăрар! — тесе кăшкăртăм.

Пирĕн минометсем тăвăллăн пеме тытăнчĕç. Флангсенчен пулеметсем вут тăкма пуçларĕç. Тупăсем ĕçе тытăнчĕç. Боецсем сике-сике тăчĕç.

— Малалла, атакăна!

Боецсем, пурте пĕр çын пек пулса, тăшман окопĕсем патне сиксе ӳкрĕç. Хаярлăхпа тавăру пĕрлешрĕç. Эпир штыксемпе те, гранатăсемпе те, пăшалсемпе те çапăçрăмăр. Кашни окоп нимĕçсен çăви пулса тăчĕ.

Çак ĕç çутăлас умĕн пулса иртрĕ. Çĕре эпир вăйлă çапăçăвăн вут-çулăмĕнче çĕрлерĕмĕр.

— ... Çакă ĕнтĕ героизм евĕрлĕ-и-ха? — шӳт тумасăрах ыйтрĕ Павлов. — Героя эпĕ çапла ăнланатăп: вăл мĕн те пулсан халиччен туман ĕç тумалла. Пирĕн кунта ун пеккисем пур ак...

Эпĕ вара ăна пӳлсех çапла каларăм:

— Пирĕн кунта ун пеккисенчен ак старший политрук Павлов пур, — терĕм.

С. ТРЕГУБ.

☆

## ПАТТĂР ТАНКИСТ

Танкист Иван Криков каллех фронта каять. Çула май пĕр каçлăха унăн Мускавра чарăнмалла пулчĕ. Столицăри юлташĕсем ăна, паллах, кĕтмен, çавăнпа та тĕлпулу хаклăрах та кăмăллăрах пулчĕ. Вăл ĕлĕк студентчĕ, халĕ паттăр танкист. Вĕренсе пурăннă чухне выртса тăнă кровать çине ларчĕ те вăл, стена çумнерех тайăнса, фронтри юлташĕсем çинчен каласа пама тытăнчĕ.

Çурçĕрте çутă сӳнчĕ. Пӳлĕмре сĕм тĕттĕм пулчĕ. Юлташăн сасси çав-çавах шăппăн илтĕнчĕ.

Ирхине юлташ каланисене эпĕ пĕтĕмпех блок-нот çине ӳкерсе илтĕм.

... Пĕтĕм тавралăха аçа-çиçĕмлĕ асар-писĕр кĕрлев янтратса тăрать. Таçта аякра тупăсем татти-сыпписĕр кĕмсĕртетеççĕ, çывăхрах бомбăсем, снарядсем килсе ӳке-ӳке çурăлаççĕ. Унта та кунта персе çĕмĕрнĕ танксем çунаççĕ, вут тивсе илнĕ самолетсем çĕре пере-пере анаççĕ. Нимĕн те илтĕнмест. Иван Криков хăйĕн танкĕпе пĕрмаях тăшман çинелле кĕрет. Ун танкĕнчен инçех те мар хамăрăн пĕр танка вут хыпса илет. Кĕçех унăн ăшĕнчен пĕр çам-

рӑк ҫын сиксе тухать. Иван Криков пӑхать те—хӑйсен юратнӑ командирне—Борис Попова палласа илет.

— Юлташа ҫӑлмаллах!—шухӑшласа илет Криков. Вӑл, Попова хӑйӗн танкӗ ҫине илес тесе, ун патнелле ҫывхарать. Умра—тӑшман танкӗсем. Вӗсем, броня тумтир тӑхӑннӑ хура кӑпшанкӑсем, Криков танкӗ ҫинелле ыткӑнчӗҫ. Чарӑнса тӑма юрамасть. Криков хӑйӗн йывӑр танкне тӑшман ҫинелле тытать, хирӗҫ пулнисене лӳчӗркесе иртсе каять.

Попов, тӑшман пулемечӗсемпе снаряд саланчӑкӗсенчен асӑрханса, упаленсе шӑвать. Ҫук, тӑшмана курайманнипе тарӑхса тапакан вӗри чӗре чӑтаймасть—Борис Попов урисем ҫине тӑрать те, Криков танкӗ патнелле чупать. Ана тӑшман танкӗ йӑраланса хӑвалама тытӑнать. Хӑвалаканӗ ҫине Криков ыткӑнать...

Борис Попов ӳкет. Вӑл йывӑр аманнӑ. Вӑхӑтра ҫитсе ӗлкӗрнӗ санитар ӑна тыла илсе тухать.

Ҫӗр ҫинче мӗнпурри—пурте арканать, лапчӑнать, ҫунать. Ҫӗр хӑй те арканса саланнӑн туйӑнать. Кун вут-хӗмлӗ кӗрлевре ҫухалать. Пирӗн танксем ҫав-ҫавах малалла—тӑшман ҫине ыткӑнчӗҫ.

Иван Криков танкӗ чи малти ретре. Ӑна хирӗҫ тӑшман танкӗсем персе, ҫунтарса килчӗҫ. Криков тӳрех тӑшманӑн пӗр йывӑр танкӗ ҫине пырать. Тӑшман чӑтаймасть—пӑрӑнать. Часах ӑна вут хыпса илет. Ҫунакан танкран пӗри

тухас тесе асăрханарах пуçне ирĕкелле кăларать. Пĕр самант—фашист пуçĕ çавăнтах касăлса аяка сирпĕнет.

— Поповшăн!—савăнса кăшкăрать Иван Криков хăй тытса пыракан танкăн командирне.— Çĕршывшăн!

Анчах командир чĕнмест. Мĕн пулнă-ши ăна?

— Командир юлташ! Василий, тусăм!—тет Криков. Командир çаплах чĕнмест.

Криков танкĕ кĕçех çунма тытăнать. Криков, хыпаланса сиксе тăрать те, çунакан танкран экипаж командирне—Василий Стемнова туртса кăларать.

Çурăм çинче сывăх юлташ. Хыçра—çулăм хыпса илнĕ танк, умра—шыв-шурлă хăвалăх, тавралăхра—çапăçăвăн тискер кĕрлевĕ. Криков, çурăмĕ çинчи юлташĕн суранĕсене хускатас мар тесе, хырăмпа шăва-шăва хăвалăха кĕрет. Вĕсем ĕнтĕ халĕ иккĕн çеç, танк та çук. Криков юлташĕн суранĕсене тирпейлĕн çыхать, шыв ĕçтерет, ăна ак часах тăн та пырса кĕрет. Вăл çиме ыйтать—пурăнатех иккен! Çак сехетре вĕсенчен те телейлĕрехи кам пулнă-ши? Никам та пулайман пулĕ çав!

Василий Стемнов хăйĕн тусĕ çине пăхса илет, тусĕ консерва банкине уçать.

Тавралăхра çав-çавах çапăçу кĕрлевĕ: тупăсем кĕмсĕртетеççĕ, пĕр вĕçĕмсĕр пулеметсем шатăртатаççĕ, сывăхрах снарядсем ӳке-ӳке арканаççĕ.

— Акă ĕнтĕ апат та хатĕр,—тет Криков

аманнă юлташне. Командир чĕнмест. Ку расра Василий Стемнов ун чĕрки çинче вилмеллех аманать. Тăшман пульли унăн пуçне шăтарса тухать.

Криков халь пĕр-пĕччен. Тутисем типсе каяççĕ, куçĕсем çунаççĕ, чĕри ыратать. Консерва банкине вăл противогаз сумки ăшне майлаштарса чикет. Юлташĕн браунингне вĕçерсе илет. Пĕр тĕме умне шăтăк алтса юлташĕн ÿтне пытарать.

Каç та пулать. Темиçе хут чарăна-чарăна çĕнĕрен хĕрсе кайнă çапăçу та лăпланать.

Криков шурлăхлă хăвалăх витĕр, тĕл-тĕлпе чĕркуççи таран, тĕл-тĕлпе пилĕк таран шывра утать.

Ирпеле каллех тупăсем ухлатма тытăнаççĕ, танксен кĕрлевĕ те илтĕнсе каять—каллех çапăçу пуçланать...

Криков пĕрре те тăшманран шикленсе каялла чакман. Яланах вăл малта пулнă. Икĕ уйăх хушшинче вăл пурĕ виçĕ танк улăштарса фашистсемпе сакăр хутчен тытăçнă. Çапăçусенчен пĕринче вĕсене вăл Н. ятлă хула юханшывĕ хĕрринче пулеметпа кĕтсе илнĕ. Нимĕçсене вăл виçĕ кун, виçĕ каç çулнă çав пулеметпа. Тăваттăмĕш каçĕнче пирĕннисем шывăн тепĕр енне чакнă. Криков хăй вырăнĕнчен чи юлашкинчен тăрса кĕпер патне чупнă. Шыв хĕрринче вăл пысăк чулсем хыçне пытанса ларнă.

Кĕпере тăшман самолечĕсем сырса илеççĕ.

Йĕри-тавраx—хыçра та, умра та, —çаплах

бомбăсем ўке-ўке çурăлаççĕ. Тимĕр кĕпер те часах арканать.

Криков ҫырăнтан та хускалмасть. Вăхăтран-вăхăта вăл аманнипе-аманманнине пĕлес тесе урисене хыпаласа пăхать. Çав хаяр тамăкра та шухăшлама вăхăт пур иккен. Криков кĕпер çинчен шухăшлать. Университетра вăл истори факультетĕнче вĕреннĕ. Ку кĕпер урлă тахçан ĕлĕк Грозный патша каçса çўренĕ. Ун чухне те ку шыв нимĕçсене куркаланă. Пĕр авантюрист, Генрих Шталеи пулас, ун чухне те Российăна çĕнсе илме плансем хатĕрленĕ пулнă. Планĕ тăрăх похода пĕтĕм Европа хутшăнмалла пулнă. Мускава илсен, Мускав халăхне Рейнпа Эльба шывĕсем хĕррине илсе кайса нимĕç княçĕсем умĕнче вĕлермелле пулнă иккен, вилесене вара сулă çинчи юпасенчен çакса шыв тăрăх юхтарса ямалла пулнă иккен. Хăра имĕш Раççей, чĕтре имĕш Раççей!.. Мĕскĕн Шталеи! Ăна Федор Конь Мускав урамĕнчех çапса ўкернĕ, кунта, ку кĕпер çинче, Шталеи шайкине Грозный патша çапса аркатнă...

Самолетсем аяккалла иртсе каяççĕ. Вĕсем ҫырăнне артиллери ахăрашма тытăнать. Хыçра нимĕçсем курăнма пуçлаççĕ.—Çирĕмĕш ĕмĕрти Генрих Шталенсем! Вĕсем асăрханмасăр, пуçĕсене каçăртса кунталла, шыв хĕррииелле, утса килеççĕ. Криков çумĕнчи юлташне хыпаласа ыйтать:

— Чĕрĕ-и?

— Чĕрĕ,—тет сасă.

— Апла пулсан, тăр, нимĕçсем çывхараççĕ.

Юлташне вăл лентă майлаштарма хушать, хăй пулеметне вырнаçтарать. Нимĕçсем çывăха çитерехпе вăл йăлтах хатĕрленсе çитет, пăхса, тĕллесе выртать.

— Кунта танкри пек тăвăр мар, выртса та, тăрса та çапăçма пулать. Татах чакмалла-мĕн пулсан, тӳрех шыва сик те шывăн ку енĕпе анаталла чăма-чăма иш. Ку енĕ, асăрхарăн пулĕ, чăнкă, вĕсем курас çук. Ну тусăм, пуçлар!— тет Криков юлашкинчен.

Сăмах пулемет илет. Вăл чарăна-чарăна (лайăхрах тĕл илсе) калаçма тытăнать. Эх, калаçнă та вара! Нимĕçсенчен хăшĕсем малалла тăрăна-тăрăна аннă, сăмсисемпе çĕр сухаланă, хăшĕсем каялла, юпа пек, çаврăна-çаврăна çапăннă.

Хăш вăхăтра суранланнă Криковăн сулахай аллипе хăрах аякĕ? Тен пулемет калаçнă хушăра? Тен, кам пĕлет, шывра чăма-чăма ишнĕ чухне? Ăна-кăна астуса илме вăхăт пулман, вăл çапăçнă, фашистсене çулнă...

Унтанпа ĕнтĕ пайтах вăхăт иртнĕ. Ирхине вăл тусĕсене çапла каларĕ:

— Вĕлеретĕн те савăнатăн. Тата мĕн чухлĕ нумай вĕлерен—çавăн чухлĕ савăнăç нумай.

Вăл çамрăк—22 çулта çеç. Нумай пулмасть вăл Вăрмар районĕнчи Ĕнĕшпуç ялĕнче чупса çӳренĕ. Халĕ вăл вĕсемшĕн герой! Чăн-чăн çелă савăнăç мĕнне те вăл хăйĕн юлташĕсенчен малтан пĕлчĕ.

И. МОИС.

## МАН ВЗВОДРИСЕМ

Кĕрхи хĕвелсĕр ир. Пĕтĕм тавралăха тĕтре хупăрласа тăрать. Пирĕн хыçра, унта та кунта, пĕр тĕлли-паллисĕр, нимĕç снарячĕсем çурăлаççĕ. Хушăран „куккуксем" автоматсенчен пере-пере илеççĕ. Кăна ĕнтĕ вĕсем тĕллесе мар, çук, пире хăратасшăн çеç çапла айкашаççĕ. Анчах та пирĕннисем хăракан йышшисемех мар. Паттăрăн кĕтсе илеççĕ вĕсем ире, хăюллăн кĕреççĕ вутлă вăрçа.

Хĕвеланăç фронтĕнче, ытти халăхсен маттур ывăлĕсемпе пĕрле, чăваш паттăрĕсем те сахалах мар. Вĕсем, хăйсене хăйсем те хĕрхенмесĕр, тăшманпа араслан пек паттăрăн çапăçнине мана хамах курма тиврĕ.

Акă хăшпĕр эпизодсем.

Пирĕн рота приказ илчĕ: Ирхине, 5 сехетре, С. ялĕ çине атака тумалла. Çав ялтан нимĕçсене хăваласа кăларса, пирĕн хамăрпа кӳршĕллĕ батальона Н. высота çине вырăнаçма пулăшмалла.

Рота командирĕ—старший лейтенант Сергеев юлташ командирсене пурне те çак ĕçе мĕнле

тумаллине, нимĕçсен малти чаçĕсем патне ăç-тан тата епле пымаллине тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Акă ĕнтĕ эпир ялтан пĕр çĕр метрта çеç. Клевер ăшĕнче пытанса выртатпăр. Нимĕçсем пире курмаççĕ. Тăшмансем хăш тĕлтен пенине асăрхатпăр та, нимĕçсен окопĕсем патне тата çывăхарах шуса пыратпăр.

— Атакăна! Тăван çĕршывшăн! Сталиншăн!— тесе кăшкăрса яратăп, пĕтĕм взвод пĕр харăс-сăн çĕкленсе, гранатăсене хатĕр тытса тăшман çине ыткăнать.

Хĕрӳ çапăçу пуçланса каять.

— Гитлере вилĕм!—тесе кăшкăраççĕ боецсем. Вĕсем штыкпа та, прикладпа та калама та çук лайăх ĕçлеççĕ.

Эпир тапăнасса кĕтмен фашистсем, çухалса кайса, ялтан, епле килнĕ çапла, тухса тарчĕç.

Çапăçу хирне 30 вилĕ выртса юлчĕ: нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем.

Кунсăр пуçне нимĕçсем 40 винтовка, 3 руч-ной пулемет, 8 пистолет тата шучĕ те çук нумай патронсем пăраха-пăраха хăварчĕç.

Чăваш боецĕсем мухтава тивĕçлĕ çапăçрĕç. Уйрăмăнах М. Григорьевпа Я. Григорьев ком-сомолецсем хăйсен паттăрлăхне палăртрĕç. Вĕсем кашниех икшер-виçшер фашиста штыкпа тире-тире пăрахрĕç.

Кунта эпĕ тата ятарласах хам взводри боец, Сĕнтĕрвăрри районĕнчен, Янташ ялсоветĕнчен килнĕ паттăр чăваш ачи, Власов юлташ çинчен

асӑнса хӑварасшӑн. Вӑл вилчӗ. Анчах та ун ячӗ ӗмӗр-ӗмӗр пирӗн чӗресенче пурӑнӗ. Власов юлташа фашистсен пысӑк ушкӑнӗ ҫавӑрса илнӗ. Хыҫӗнче те, умӗнче те тӑшман. Власов тискер ҫӗлен-калтасенункинче—пӗр пӗччен. Ҫапах та вӑл хӑраса ӳкмест. Хӑйне пӑхса ӳстернӗ тӑван ҫӗршывӑн ятне ямасть. Араслан пек тӑшмансем ҫине сиксе ӳксе, штыкне вылятма тытӑнать. 5 фашиста вӗлерме ӗлкӗрет, хӑй геройсен вилӗмӗпе вилет.

* * *

Нимӗҫсене вӑрмантан хӑваласа кӑларма хушрӗҫ. Эпир тӑшман вӑйлӑ персе тӑнине пӑхмасӑрах, тӳрем ҫӗртенех пӗр выртса, пӗр чупса лапа ҫитсе ӳкрӗмӗр. Тӑшмансен малти линийӗ ӗнтӗ пиртен 75 метрта ҫеҫ.

Станковӑйпа ручной пулеметсене эпир мала ятӑмӑр. Тӑшмансем сиссе те илеймерӗҫ, вӗсен ҫийӗнче тӑхлан ҫумӑр чашлаттарса ҫума та тытӑнчӗ. Эпир вара тӑшман ҫине тапӑнса кӗрсе кайрӑмӑр. Умранах пырса ҫапрӑмӑр та, тӑшмана пӗтӗмпех аркатса тӑкрӑмӑр. Вӑрмана хамӑр йышӑнтӑмӑр.

Ҫак ҫапӑҫура уйрӑмӑнах отделени командирӗ А. Григорьев, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчен, Сотниковский ялсоветӗнчен килнӗ юлташ, паттӑр ҫапӑҫрӗ. Вӑл пӗр нимӗҫ офицерне граната ывӑтса вӗлерчӗ, тепӗр фашиста, хӑйне пеме тӗллесе тӑраканскере, винтовкӑпа ҫапса ҫӗр ҫумне лапчӑтса хучӗ.

Çак атакăра эпир нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсене аллăшне вĕлертĕмĕр, вунпĕр салтакне тата икĕ офицерпа пĕр врачне тыткăна илтĕмĕр.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем фашистсемпе отлично çапăçаççĕ.

Вĕсем халăх телейĕшĕн, ирĕкĕшĕн, хăйсен тăван çĕршывĕшĕн мĕн çĕнтериччен, е кирлĕ пулсан, мĕн куçĕсене хупиччен çапăçма тупа тунă паттăрсем.

Вĕсем юлташĕсемпе йăваш, çепĕç, хăть хăçан та пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр, анчах тăшманшăн вĕсем чултан та хытăрах, аça çиçĕмрен те хăрушăрах.

Çавнашкал боецсемпе хăть мĕнле атакăна тухсан та шиклĕ мар: вĕсемпе хур курмастăнах, вĕсем çĕнтереççех.

**Кĕçĕн лейтенант В. К. ДЖАУЛЬ-КАРПОВ.**

★

## ХĂЮЛЛĂХ

Журналистика институтĕнче вĕренекен студентсем 1939 çул, хĕллехи каçпа Федот Ситова, хăйсен юратнă юлташне, Хĕрлĕ Çара ăсатма пухăннă.

Çав каç Ситов хăйĕн тусĕсене çапла каланă:

— Эпĕ, юлташсем, хамăрăн тăван çĕршывăмăршăн, Совет влаçĕшĕн, кирлĕ пулсан, пуçа та хума хатĕр. Мана Совет влаçĕ çеç çын турĕ, манăн тăван халăхăма Совет влаçĕ çеç савăнăçлă, телейлĕ пурнăç пачĕ.

Мĕн тунă пулăттăм-ха, кам пулнă пулăттăм-ха эпĕ, Совет влаçĕ пулман пулсан? Чакаланнă пулăттăм çав, хурт пек, çĕр çинче, сĕтĕрĕннĕ пулăттăм çав авалхи йывăç акапуçĕ хыççăн.

Ирсĕр трахум куçăма-пуçăма чĕп-чĕр юн тăвĕччĕ, медаль çакнă жуликсем пĕвĕме-çийĕме чĕп-чĕр юн тăвĕччĕç...

Мĕн каламалли пур ĕнтĕ унта. Пурнăç мар пулнă пулĕччĕ—вилĕм. А халĕ... халĕ эпĕ, чăваш ачи, аслă шкултан вĕренсе тухрăм. Манăн килйышăм колхозра ыр курать, хаваслă та пуян пурнăçпа пурăнать. Пирĕн çĕршыври пек тулли, илемлĕ пурнăçа истори нихçан курман та, илтмен те. Епле-ха, апла-тăк, парăпăр-ха эпир

çав çĕршыва тăшмансен хурри пулма. Çук, вилсен те, тăшман пирĕн ирĕклĕхе туртса илес çук...

Тепĕр кунне, ирпе, Ситов фронта тухса кайнă.

* * *

Ситова хăйĕн чаçне çитсенех, фронтри хаçат редакцийĕнче ĕçлеме хушнă. Фронтри куллен кунхи ĕç, ответлăран та ответлă ĕç пуçланса кайнă.

Ситов Хĕрлĕ Çара тухса кайнă чухне каланă хăйĕн сăмахне çиле яман. Хăюллăн та паттăрăн кĕрешет вăл хăйĕн тăван çĕршывĕшĕн. Ăçта хăрушăрах, ăçта ĕç ответлăрах—Ситов çавăнта. Вăл нихçан та канăçа пĕлмест. Çапăçу пынă вăхăтра тăшманпа вăл аллине пăшал тытса çапăçать, пушаннă хушăра перо тытса кĕрешет. Хаçата корреспонденцисем çырса хăйĕн вăрçăри паттăр тусĕсене çĕнĕрен-çĕнĕ, çĕнĕрен-çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать.

Совет Союзĕн геройĕ Ульянов юлташ çинчен пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Паттăр Ульянов белофинсемпе кĕрешнĕ çĕрте пĕтĕм Совет Союзне тĕлĕнтерчĕ, унăн чаплă ĕçĕсене совет çыннисем ĕмĕр-ĕмĕр манмĕç. Федот Ситов хăйĕн хаçатĕнче çав Ульянов çинчен, унăн чаплă ĕçĕсем çинчен питĕ те тĕплĕн çырса кăларнă. Кăна вăл çын каланă тăрăх мар, çын курнипе мар çырнă. Вăл хăй Ульянов юлташпа пĕрле пулнă,

унпа юнашар тăрса паттăрăн белофинсемпе çапăçнă.

Е тата тепĕр тĕслĕх. Выборг хули патĕнче çапăçу пынă чухне Ситовăн малти позицине лекмелле пулнă. Çул çинче ăна белофинсем çавăрса илсе, ун çине пульăсем çутарма тытăннă. Çывăхрах снаряд çурăлса кайнă, Ситова юрпа çĕр айне туса хунă. Паттăр Ситова выртсан-выртсан тин тăн пырса кĕнĕ. Ăна çав тери йывăр пулнă, унăн пĕтĕм шăмми-шакки ыратнă. Анчах çапла пулсан та, Ситов каялла чакман, хӳтĕрех, лăпкăрах вырăн шыраман. Тăшмансем пĕр тăтăшран вут тăкса тăнине пăхмасăрах, вăл çаплах малалла шунă, малти позицине çитсе, хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле хĕрӳ çапăçăва кĕрсе кайнă.

Çапăçу лăплансанах, каçпа, Ситов редакцине çитнĕ. Вăл очерк çырса пынă. Унта вăл пирĕн чаçсем Т... станцине тата кирпĕч заводне туртса илни çинчен çырнă.

Çав очерк—очерк мар, совет паттăрĕсен хăюллăхĕпе чăтăмлăхĕ çинчен юрланă хăватлă юрă пулнă.

Пĕринче Ситов, ятарласа панă задание пурнăçланă май, хăйсен подразделенийĕпе пĕрле пĕр 23 километра яхăн тăшман тылне шала кĕнĕ. Каçалапа унăн редакцине хуть те мĕнле пулсан та материал тăратмаллах пулнă. Ку задание пурнăçлама çăмăлах пулман. Анчах çапла пулсан та, Ситов ăна пурнăçланă пурнăçланах. Сĕм çĕрле, пилĕк таран юр тăрăх ашса,

шартлама сивве пăхмасăр, паттăрăн утнă вăл хамăрăннисем патне. Вăл илсе çитернĕ материала ирхине хаçатра пичетлесе кăларнă.

Ситов хăюллă та чăтăмлă, тăрăшакан боец. Вăрçăра пуçаруллă та хастар пулнăшăн ăна ЛВО военнăй Совечĕ ятарласа тав тунă тата грамотăпа наградăланă. Дивизи командованийĕ Ситова хăй ятне çырнă часипе наградăланă.

* * *

Халĕ, аслă отечественнăй вăрçă пынă кунсенче, Ситов Х... пункта хўтĕлет. Кунта та вăл пĕр хут кăна мар хăйĕн хăюллăхĕпе паттăрлăхне кăтартать.

„Известия" хаçатра çакăн пек эпизод çинчен çырнă. Тишин лейтенант сыхласа тăракан застава çине белофинсен батальонĕ тапăннă. Заставăна сыхласа тăракансем сахаллăн пулнă. Урса кайнă фашистсем пирĕннисене хĕссех пынă. Хамăрăннисене пулăшма хăйĕн боецĕсене пухса кĕçĕн политрук Ситов юлташ пырса çитнĕ. Хăюллă боецсем, паттăрăн çапăçса, хăйсенчен темиçе хут йышлăрах тăшмана аркатса тăкнă. Çапăçу хирне фашистсен виллисем вырта-вырта юлнă. Трофейăсене, кирлĕ документсене пухса, боецсем ăнăçлăн каялла заставăна таврăннă.

Кун пек эпизодсем Ситовăн фронтри пурнăçĕнче хушăран пулакан эпизодсем çеç мар. Куллен-кунах пулса пыраççĕ вĕсем. Куллен-

унах тенĕ пек урнă фашист кĕтĕвĕсем Совет урмаутравĕ çине тапăнаççĕ. Куллен-кунах çурмаутрава хӳтĕлекенсене хĕрӳллĕ çапăçура пулма тивет.

Çав çапăçури паттăрсенчен пĕри—вăл паттăр чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ, маттур боец, маттур журналист—Федот Ситов.

**Ал. МОРСКОВ.**

☆

## КĔПЕР ПАТĔНЧЕ

Эпĕ разведчик. Юрататăп эпĕ вăл канăçсăр ĕçе. Час-часах тăшмансем хушшинче пулатăн, вĕсен вăйĕсем мĕнле вырнаçнине пĕлсе, командованине хыпарлатăн. Пăртакран пăхатăн та— тăшман йышăнса тăракан позициревн тип-тикĕс уй тăрса юлать. Хăвăрах куратăр ĕнтĕ, манăн ĕç куç умĕнчех пулса пырать, ĕлĕкрех колхозра ĕçкунĕ шутланă пек, хам мĕн тунине курленех картса пыма пултаратăп...

Пĕррехинче мана подразделени командирĕ хăй патне чĕнтерчĕ.

— Корнев юлташ,—тет,—эсир çапла-çапла разведчик пулаканччĕ,—тет. (Кунта унăн сăмахне пурне те каламасан та юрать пулĕ, мĕншĕн тесен вăл мана ытлашширех те мухтаса пĕтерчĕ). Çав Л. вăрманне кайса пĕр ĕç туса килмелле,—тет.

Ĕçĕ мĕнлерех иккенне те ăнлантарса пачĕ.

— Есть. Л. вăрманне кайса пĕр ĕç тумалла!— тетĕп эпĕ.—Халех каймалла-и?

— Халех каяс пулать,—тет.

Л. вăрманĕ пирĕншĕн юлашки вăхăтра чăнчăн ылханлă кĕтес пулса тăначчĕ. Час-часах е пĕр енчен, е тепĕр енчен пирĕн çине нимĕçсен

танкĕсем сике-сике тухаççĕ. Хутран-ситрен шапа çурăмĕ тĕслĕ броневик те курăнкалать. Пирĕн çине переççĕ-переççĕ те, эпир вырăнтан та хускалманнине кура, каллех вăрмана кĕрсе çухалаççĕ. Хăш вырăнта хывнă пулĕ вĕсем вăрманти юханшыв урлă кĕпер—ниепле те тавçăрса илме çук: эрни-эрнипе йĕри-тавра путсĕр тĕтре йăсăрланса тăрать. Пирĕннисем кулленех тупăсемпе пулеметсенчен „хыçса" илеççĕ вăрмана, бомбăсем те пăрахаççĕ—çук, курăнман кĕпер вырăнтан та хускалмасть пулас: эпир пеме чарăнсанах вăрмантан каллех нимĕç танкĕсем йăраланса тухаççĕ.

Ак халĕ çав кĕпер хăш вырăнтине тĕплĕн пĕлсе килме ярать те ĕнтĕ мана командир.

Кирлĕ хатĕрсене илтĕмĕр те виçĕ боецпа çула тухрăмăр. Малтанах ик-виçĕ километр пек сылтăмалла пăрăнмалла пулчĕ (тӳррĕн кайсан тăшман пирĕн часть ăçта тăнине асăрхама пултарать), вара тин айлăмри вăрман еннелле пăрăнтăмăр. Хальхинче пире хайхи йĕрĕнчĕк тĕтре те юрарĕ: виçĕ утăмран çын кĕлеткипе йывăç тĕми пĕр евĕрех курăнаççĕ, тăшман куçĕ умне пуласран ытлашши шикленмеллиех те çук.

Упаленкелесе вăрмана çитсе кĕтĕмĕр хайхискер. Чĕркуççисем часах лачкам шыв пулчĕç. Алă айĕнче мăклă çĕр лачăртатать; туратсем çаклана-çаклана туртаççĕ.

Çурма-тилĕ, çурма-вилĕ, тенĕ пек пулса (чееленсе, вилнĕ çын пек хыта-хыта выртса) юханшыв хĕррине çитсе тухрăмăр. Кунта пуш-

шех нимĕн те курăнмасть вара, пĕтĕмпех çăра тĕтре хупăрласа илнĕ. (Каярахпа ăнлантăм эпĕ: унта тĕтре кăна пулман иккен, фашистсем тĕтĕм те йăсăрлантарса тăнă пулнă.) Сывламасăр та итлесе пăхатпăр, çĕр çумне те выртса тăнлатпăр, çук, вăрмана пĕр чĕрчун та юлман пек, нимĕнле сасхура та илтĕнмест. Шыв хĕррипе юхăма хирĕç çӳлелле утрăмăр. Пĕр виçĕ километр пек кайсан, таçта шыв шăмпăртаттарни илтĕнчĕ, унтан тимĕр сасси пулчĕ. Пирĕн тĕлте çырма чавса пек кукăр туса хĕвеланăçнелле пăрăнать. Шыва урлă çĕрĕк йывăç йăванса каçма пек пулса ларнă, тĕрлĕ ăпăр-тапăрсем пуçтарăннă.

Юлташсене çыран хĕррине хăварса, йывăç суммипе майĕпен шыва антăм та, сасăсем еннелле тинкерсе пăхма пуçларăм. Кĕпер! Манран инçех те мар тĕтре витĕр кĕпер палăрать. Питĕ те чеелле тунă вара хăйне. Карлăксем çумне те, шыв варрине те темĕнле амакла йывăçсем лартса тухнă, самолет çинчен пăхсан ăна ниепле те асăрхаяс çук.

Чунăм лăштах пулчĕ. Халь ĕнтĕ каялла кайсан та юрать, тетĕп. Анчах... мĕне пĕлтерчĕç-ши вăл паçăрхи сасăсем?

Командира пĕлтерме юлташсене каялла ятăм. Хам йывăç çуммипе çырман тепĕр енне тухрăм та çатрака айĕпе малалла упалентĕм. Инçех те кайманччĕ—ура сассисем илтĕнчĕç. Тата пăртак шурăм. Умра темĕнле пысăк мĕлке палăрма пуçларĕ. Чипертерех пăхатăп та—танк, аça

çапасшĕ! Ун хыçĕнчех тата тепре. Унтан—тата... И-и-и, хайхискер, йĕркипе ларса тухнă: Вăтăр сакăр танка çитертĕм шутласа.

„Фашистсем пирĕн çине пысăк атака тума хатĕрленеççĕ иккен, пĕлтерес часрах командира“, пырса кĕчĕ пуçа шухăш.

Анчах каялла çырма хĕррине çитсен, тепĕр шухăш шиклентерме пуçларĕ.

„Эпĕ чаçе çитиччен вĕсем кĕпер урлă каçма ĕлкĕрсен?.. Хамах ишсе антарма пултараймăп-ши эп ăна?“

Эпĕ хайхи çĕрĕк йывăç суммипе шыв хĕррине антăм та кĕпере лайăхрах сăнама пуçларăм. Чылаях тĕреклĕ тунă ăна: юписене сыпăкăн-сыпăкăн илĕнекен тимĕртен купаланă, хăма вырăнне пĕренесене çурмаран касса сарнă...

Кĕпер çинче хуралçăсен мĕлкисем палăраççĕ. Анчах ура сасси таврашĕ пĕртте илтĕнмест, ахăрнех, аяла темĕскер çемçе япала сарнă пулмалла.

Çыран хĕрринчи куракĕсен айĕпе кĕпер айне кĕтĕм. Аммонала варринчи юпа çумне вырнаçтарса лартиччен сехет те ытла иртрĕ пулмалла...

Мĕнле туйăм пулнă тетĕр-и манăн çав вăхăтра? Вăт ку ыйту пирки эпĕ сире нимех те каласа параймастăп пулĕ, мĕншĕн тесен туйăмсене сăнаса тăма манăн ун чух вăхăт та, май та

пулмарĕ. Умра пĕр ĕç: часрах аммонала вырнаçтарса лартасси. Пуç тăрринче хуралçăсем утса çÿреççĕ, вăтăр-хĕрĕх утăмра—тăшман танкĕсем, çапах, ăшра канăçлă та аван пек туйăнса тăрать: хушнă ĕçе тунă; кирлĕ пулсан кĕпере эпĕ кашни самантрах взрыв туса ишсе антарма пултаратăп.

* * *

Каялла та çав вырăнах тухса тăтăм. Халь ĕнтĕ чи кансĕрри пуçланчĕ: тăшман танкĕсем кĕпер çине кĕрессе кĕтсе тăмалла.

Аммонал шнурокĕн вĕçĕ алăра.

Çанталăк пирки калама та кирлĕ мар. Кĕрхи çанталăк мĕнли каламасăрах паллă: тĕтре, йĕпхÿ, шăмă аррине витекен сивĕ...

Кăкăр çуммипе шыв шăнкăртатса юхать. Пуç тăрринче йывăçсем чăштăртатаççĕ. Пăч тĕттĕм пулса çитрĕ.

Урасем шăнса тахçанах пĕлми пулчĕç. Шăнăр туртса лартасран шикленсе çеç хамăр çыран енне тухса пĕçĕсене сăтăратăп. Ăна та пулин аран-аран, йăпшăнса та сыхланса, тăнран кайса ÿкес патне çитсен кăна.

Вокзалра поезд килессе кĕтсе ларса курнах ĕнтĕ эсир. Анчах çак çанталăкра мăй таран тенĕ пек шывра ларасси... мĕн калама ĕнтĕ, юлташăм, питĕ кансĕр. Халĕ кулăшла пек туйăнать пулĕ те, вăхăчĕ-вăхăчĕпе çырмаран сиксе тухса кăшкăрса ярас килетчĕ вĕт тарăхнă енне. Кĕперне халех сывлăша сиктерме те шут-

ласа пăхрăм темиçе хут. Анчах мĕн усси пушăлла кĕпере аркатнинчен? Кĕмелле-ке-ха ун çине фашистсен танкĕсем, хускалмалла-çке-ха хăçан та пулин вăл çĕлен кĕтĕвĕ.

Çав каçхи пек вăрăм çĕр эпĕ çуралнăранпа та урăх курман. Икĕ ĕмĕр тăршшех тăсăлчĕ-и тен вăл. Çутăласса сунмарăм вĕт, кун çути мĕн тĕслине те манса карăм. Юрать, çĕрĕк йывăç пур, ун хӳттипе çыран хĕррине тухкалатăп. Çил тапранни те пулăшрĕ: кăпăр-капăр сас-чӳсене йывăç тăррисен шавĕ хуплать.

Юлашкинчен тӳпе майĕпен кăвакарма пуçларĕ. Юнашар участокра икĕ енчен те тупăсем пересçĕ. Шыв çийĕпе таçтан çунăк шăрши килет, ахăрнех, анатарах ялсем çунаççĕ пулмалла.

Пирĕн участокра çаплах нимĕнле сас-хура та çук-ха.

Тата çур сехет пек иртсен çеç нимĕçсен лагерĕ хыçне пирĕн енчен пĕр снаряд килсе ӳкрĕ. Тепри кĕпертен çӳлерех шыва персе анчĕ.

Тăшман артиллерийĕ те урса кайсах пеме тытăнчĕ. Вара тин моторсем кĕрленине илтрĕм. Унтан тăшман танкĕсем хăйсем те курăнчĕç.

Пĕрремĕш танкĕ çирĕк турачĕсен хушшинчен тухрĕ те мăка сăмсипе унталла-кунталла пăркаланса кĕпер çине кĕчĕ. Ыттине астумастăп. Хăмасем сирпĕннине тата танксем шыва йăтăнса аннине çеç курса юлтăм, мана взрыв хумĕпе çыран хĕррине кайса çапрĕ.

Сехет пек иртсен, юлташсем те пырса çитнĕ вара вăл вырăна... Хамăр енчи çыранри нимĕç-

сене пĕрне те каялла чакарман: е тыткăна илнĕ, е тураса тăкнă.

Эпĕ хам госпитальре çеç тăна кĕтĕм. Шăннипе урасем хускалмиех пулса ларнăччĕ, халĕ самайланаççĕ вăн, хăвăрах куратăр. Тепрер эрнерен каллех фронта таврăнас тетĕп.

Тахăш хаçатра ман сăна та çапса кăларнă теççĕ те, хам курмасăр ĕненместĕп-ха. Кашни кĕпер ишекен çын сăннех хаçатсенче кăлара пуçласан...

...Çакна мана Куйбышев облаçĕнчи Кумар чăвашĕ Иван Корнев каласа пачĕ.

Ф. УЯР.

☆

# УРХАМАХПА

Чăтлăх вăрман витĕр, хирсемпе тусем урлă, тăрăх-тăрăх улăх тăрăх, вăхăт-вăхăт шыв-шур урлă кавалери отрячĕ пынă. Урхамахсем çине утланнă кавалеристсем тăшман вырнаçнă вырăна çитсе тăнă. Сасартăках çутă хĕçсем çиçĕм пек çиçме тытăннă, пулеметсем шатăртатма тапраннă, тăшман пуçĕсем касăла - касăла ывтăннă...

Кавалери отрячĕ тăшман чаçне аркатса тăкнă та, çил пек килсе çитнĕскер çил пекех таçта кайса çухалнă, каярахпа Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрлешнĕ.

Ку—пĕр боевой эпизод кăна. Çак кавалери чаçĕнче служить тăвать те ĕнтĕ хамăр патрисем—Игнатий Леонардович Сакович. Саковича Шупашкарта пурăнакансем лайăх пĕлеççĕ, ипподромра ĕçлекенсем ăна татах та лайăхрах пĕлеççĕ.

Урхамах пек лашашăн Сакович чунне пама пултарать. Уншăн лаша тени çил пек, çиçĕм пек пултăр. Республикăри колхозсем чи лайăх лашисене ипподрома ярса тăнă. Ипподромра çав урхамахсене малтанласа Сакович çӳреме хăнăхтарнă. Сакович хăй çамрăках та мар ĕнтĕ.

Унӑн пичӗ-куҫӗ те ӗнтӗ пӗркеленме тытӑннӑ. Анчах та вӑл лайӑх лаша ҫине ларсанах ҫамрӑкланса кайнӑ, лаши тӑвӑл пек вӗҫтерсе пырать пулсан, ӑмӑртусенче малти вырӑна тухать пулсан, вӑл калама ҫук савӑннӑ.

... Хӗвеллӗ июнь ирӗ. Хӗвелпе пӗрле вӑраннӑ кайӑк-кӗшӗк юрӑ шӑрантарнӑ, хӗвелпе пӗрле вӑраннӑ ҫынсем яланхи пекех ӗҫ тытнӑ. Анчах та телейлӗ ҫӗршывӑн мирлӗхне пӑсса, ҫав ирхине ҫӗршыв чиккисем урлӑ эрешмен евӗрлӗ свастиклӑ бомбовозсем каҫнӑ. Ҫав кунхине, куллен кунхи пекех, Игнатий Леонардович ипподромалла утнӑ. Сасартӑках хумханакан дикторӑн сасси янраса кайнӑ. Радио тӑрӑх хӑюллӑ та витӗмлӗ сасӑпа Молотов юлташ калаҫма тытӑннӑ.

Тӑшман пирӗн ҫӗршыв ҫине сӗмсӗрӗн сӗкӗнчӗ. Нимӗҫсене Сакович иртнӗ вӑрҫӑрах пайтах шакканӑ. Епле-ха вӑл паянхи кун килӗнче чӑтса лартӑр? Ҫапах та, ҫул тӑрӑх виҫсен, вӑл ҫамрӑк ҫын мар ӗнтӗ, вӑл аллӑпӗр ҫулта ӗнтӗ. Ҫук, вӑл хӑйне ватӑ ҫын вырӑнне хумасть, унӑн куҫӗсем те ҫивӗччӗн ҫунаҫҫӗ, шӑнӑрлана пуҫланӑ аллисем те хӗҫе хаяррӑн тытаҫҫӗ.

Игнатий Леонардович Шупашкар хулинчи военнӑй комиссариата васкавлӑн заявлени ҫырнӑ. Унпа килӗшнӗ. Вӑл часах фронта тухса кайнӑ.

Эпир фронтран янӑ пысӑках мар сӑнӳкерчӗкӗ ҫине пӑхса тӑратпӑр. Вӑл ӗнтӗ сарӑха та пуҫланӑ. Ӳкерчӗк ҫинче типшӗмрех сӑн-сӑпатлӑ,

витĕр куçлă çын. Гимнастерка петлицисенче квадратсем.

Сакович мĕн вăрçă пуçланнăранпах фронтра. Нумай çапăçура, нумай походра пулнă вăл. Темиçе хутчен те вăл тăшманпа хире-хирĕç тăрса çапăçнă.

Сăн ӳкерчĕкĕ çине пăхатăн та—нумай тӳсни, нумай курни палăрать. Туртса илнĕ хуласемпе ялсенче фашистсем асни Саковича хăратман, фашистсен ирсĕрлĕхĕ хаярлăх çеç çуратнă.

„Фашист бандисене урнă кашкăрпа та, сăнчăртан вĕçертсе янă вĕшле йытăпа та танлаштарма çук. Вĕсенчен ирсĕрри, усалли тĕнчере те çук. Тытса сутасси, улталасси, хаяр хура ĕç тăвасси вĕсен чи юратнă ĕçĕ. Эпĕ хам вĕсене ытти боецсемпе командирсем пекех çав тери курайми пулса çитрĕм. Çапăçăва кĕрсен эпĕ вĕсене хамăн хĕçĕмпе араслан пек туратăп. Нимĕнле йывăрлăхсем те, нимĕнле испытанисем те мана чараяс çук. Хăмăр тумтир тăхăннă эсрелсене пĕтермесĕр эпĕ вăрçăран тухас çук“, тесе çырать Игнатий Леонардович хăйĕн арăмĕпе юлташĕсем патне çырнă çырăвĕнче.

Фашистла хурахсем темĕн те шухăшласа кăлараççĕ, нимĕнле хурахла ĕç умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Пĕр çапăçура хĕрлĕ кавалеристсем тăшман чаçĕ çине пырса тапăннă та ăна тураса тăкнă, тăшман юлашкисем хăраса ӳксе пăрахса тарма пуçланă, хăшĕ-пĕрисем чĕмере тытнă пек хутланса ӳксе аллисене çĕкленĕ, эпĕ рабочи, тесе кăшкăрнă.

Кавалеристсем ҫӗкленӗ хӗҫӗсене каялла антарнӑ. Анчах та ҫак самант Саковичпа унӑн юлташӗсемшӗн питӗ хакла ӳкме пултарнӑ. Пытанса выртнӑ фашистсем автоматсенчен асар-та-писер пеме тытӑннӑ. Хӑюллӑ кавалеристсем хӑраса ӳкмен, тӑшман юлашкине тураса тӑкнӑ.

Игнатий Леонардович служить тӑвакан кавалери полкӗ пӗтӗм фрончӗпе малта пыракан полксенчен пӗри пулса тӑрать. Вӑл полк хаяр ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ. Вӑл полкӑн мухтавлӑ ӗҫӗсем ҫинчен „Правда" хаҫатӑн сентябрьти номӗрӗнче ӳкерчӗксем пичетленсе тухнӑ. Полк командирӗсем хушшинче Сакович чи хӑюллӑ, чи паттӑр кавалерист шутланать. „Ҫапӑҫусенче атакӑна вӑл хӑй малтан кӗрет. Хӑйӗн примерӗпе ытти боецсене чӗнет, патварлӑх кӗртет",— тесе ҫырнӑ Хӗвеланӑҫ енчи фронтра тухакан хаҫат Сакович ҫинчен. Дивизи командирӗ Саковича тӑшмансемпе хӑюллӑн кӗрешнӗшӗн, паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн тав тунӑ.

Чӑваш колхозӗсенчен фронта илнӗ лашасем те тӑшманпа кӗрешнӗ ҫӗрте паттӑрӑн служить тӑваҫҫӗ. „Коробочка" ятлӑ лаша („1905-мӗш ҫул" колхоз, Ҫӗрпӳ районӗ) ҫапӑҫусенче Саковича пӗрре кӑна мар пулӑшнӑ, хӗҫпе касса ӗлкӗреймен фашистсене таптаса лӳчӗркесе иртсе кайнӑ. Ҫул управленийӗн „Диночка" ятлӑ лаши дивизи командирне лайӑх итлет.

Нумаях пулмасть Игнатий Леонардович Чӑваш

АССР Халăх Çĕрĕç Комиссариачĕн коллективне çыру ярса панă. Вăл çырура Сакович хăйĕн чаплă ĕçĕсем çинчен каласа кăтартать, Халăх Çĕрĕç Комиссариатĕнче ĕçлекен сотрудниксене пĕтĕм вăя хурса тылри ĕçсене мухтавлăн туса пыма чĕнет, пĕтĕм вăйхала фронтшăн хума чĕнет, асса кайнă тăшмана часрах çĕнтерсе пăрахассишĕн Хĕрлĕ Çара пулăшма чĕнет.

„Час-часах эпир каç та куç хупмастпăр,—тесе çырать Сакович,—апла пулсан сирĕн те, кирлĕ пулсан, каçне-мĕнне пăхмасăрах талăкĕпех ĕçлес пулать. Эпĕ хам нумай çула çитнĕ пулсан та, ывăна пĕлместĕп, мĕншĕн тесен эпĕ хам хăватлă та аслă Хĕрлĕ Çарăн пĕр пĕчĕк винтти иккенне лайăх пĕлетĕп. Çав винт лайăх ĕçленинчен пĕтĕм Хĕрлĕ Çар лайăх ĕçлени килет. Тĕш-тырра тимлĕн упрăр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлăлатăр, путек-пăру йышне лайăх пăхса ӳстерĕр",—тесе çырать Игнатий Леонардович.

* * *

Эпĕ чапа тухнă кавалерист арăмĕпе—Мария Николаевна Саковичпа калаçрăм. Вăл ĕнтĕ çамрăках мар. Вăл Инçет Хĕвелтухăçĕнче Хĕрлĕ Çарта служить тăвакан Аркадий ятлă ывăлĕ çинчен, авиаци институтĕнче вĕренекен Елена ятлă хĕрĕ çинчен ăшшăн хумханса каласа парать. Часах эпир сăмаха Игнатий Леонардович çинчен пуçларăмăр. Мария Николаевна упăш-

кин сăнӳкерчĕкне тытса тăрать: типшĕмрех сăн-сăпатлă, витĕр куçлă çын ӳкерчĕкне тытса тăрать.

— Эсир ун çинчен çырас тетĕр иккен. Анчах та вăл темĕнле чаплă ĕçех туман-çке. Çакăн пек хăрушă вăхăтра, ман шухăшпа, пирĕн кашни çынах хамăр тăван çĕршыва хăюллăн та паттăрăн сыхламалла,—тет Мария Николаевна.

**СЕРГЕЙ МАКАРОВ**

★

## ХĂРАВСĂР СВЯЗИСТСЕМ

Полк фронт линийĕ патне çывхарса пынă. Вăл пĕр хўтĕ вырăна чарăнса тăнă. Боецсем таса сырма шывĕпе çăвăнса вĕри апат-çимĕç çинĕ, чĕлĕм туртнă, унтан полк каллех малалла утнă, фашистсен М. ятлă яла вырнаçнă чаçĕ çине наступлени туса пынă.

Командовани Филиппов взводĕнчи телефонистсене соединенин командnăй пунктĕнчен пуçласа полкăн командnăй пунктчĕ патне çитиччен васкавлăн телефон карса çыхăну тума приказ панă. Телефонистсем—комвзвод помощникĕ Леонченко, отделенин командирĕ Сухарев, красноармеецсем: Мундренков, Корочкин тата Казаков—наступлени пуçланнă тĕле командованин приказне пурнăçлама тытăннă. Анчах та наступлени тунă вăхăтра çакă паллă пулнă: полкăн командnăй пунктне батальонсемпе çыхăнтарайман, тата пĕр батальон çав вăхăтра малалла кайма ĕлкĕрнĕ пулнă.

Çав батальонпа çыхăну тытас ĕçе Леонченко группинех хушнă.

Малалла кайса пыракан батальонпа çыхăну тытасси питĕ те йывăр ĕç пулнă. Анчах та пилĕк связист çине тăрсах çыхăну тăвас ĕçе

пурнăçласа пынă. Катушкăсем йăтса пыракан Сухаревпа Мундренков пĕр батальон патнелле куçса пынă, Леонченко, Корочкин тата Казаков—теприн патнелле кайнă. Хӳтĕрех вырăнсенче вĕсем хăвăрт утнă, пуç тăрринче пульăсем шăхăрнă чухне, снарядсем çурăла-çурăла кайнă чухне вĕсем хырăмпа шуса пынă.

Хĕвел каçалла сулăннă вăхăтра батальон çапăçăва кĕрсе кайнă. Противник енчен вăйлăн персе тăма тытăннă. Вĕри снаряд ванчăкĕсем связистсен çумнех шăхăра-шăхăра пырса ӳкнĕ. Связистсен батальон патне çитесси пĕр 150—200 метр кăна юлнă. Тата кăшт кайсанах çыхăну хатĕр пулмалла.

Анчах та пралук пĕтсе çитет...

Батальона полк командирĕпе çыхăнтарма май килмен.

Карса тухнă пралук вĕçне Леонченко телефон аппарачĕпе пĕрлештерет те, çавăнтах полк командирĕн уçăмлă сассине илтет.

— Леонченко юлташ! Батальон командирне пĕлтерĕр: противник сулахай флангра пухăнса тăрать, флангран миномётсемпе вăйлăн персе тăмалла,—тенĕ полк командирĕ.

Мĕн тăвас? Çыхăну çук. Приказа мĕнле çитсе пĕлтермелле? Вара Леонченко юлташне хушать:

— Корочкин юлташ! Полк командирĕн приказне халех батальон командирне кайса пĕлтерĕр,—тет.

Тăшман енчен çаплах пеме чарăнман: снарядсем çурăла-çурăла уланă, пульăсем шăхăра-

шăхăра иртнĕ. Корочкинпа Казаков телефонистсем хырăмпа шуса кайса полк командирĕнчен Леонченко илсе тănă приказсене батальон командирĕ патне çитернĕ.

Комвзвод помощникĕ Леонченко миномет вут-хĕмĕ айĕнче виçĕ сехете яхăн выртнă. Мина çурăлнисем паттăр телефониста аппарат патĕнчен виçĕ хутчен аяккалла ывăтса ярса, çĕрпе витсе хунă. Кашни хутченех Леонченко хăй çинчи тăпрана сирсе, телефон патне шуса пырса ларнă, хаяррăн çапăçакан батальонпа çыхăну тытса тănă.

* * *

Противник сăртлă вырăна вырнаçнă. Вăл сăрт çинчен пăхсан, çывăхри участоксем 3—4 километр таран лайăх курăнса тănă.

Противника тактика енчен лайăх пулса тăракан вырăнтан хăваласа ямалла. Полка задани панă: çав çӳллĕ вырăнпа Ж. ялне йышăнмалла. Çӳллĕ вырăн патне пыма шурлăх чăрмантарса тăнă, анчах та шурлăх çинче ӳсекен хăвалăхпа çирĕклĕх пытанса пыма май панă. Саперсем шурлăх урлă каçă хывнă, вара пирĕн войскăсем ирпе ирех шурлăх урлă каçса, лайăх вырăн йышăннă.

Взвод командирне—Филиппова—приказ панă: командăй пунктран пуçласа шурлăх урлă каçса батальонпа çыхăну тытмалла. Филиппов, Сухарев, Мундренков тата Наволокин юлташсем приказа пурнăçлама тытăннă.

Шурлăх варрине çитсен, связистсен группи çине противник вăйлăн персе тăма пуçланă. Çўлте тăшман авиацийĕ те курăнса кайнă. Связистсем шурлăхра лăпчăнса выртнă.

Анчах вĕсен нумай выртма май килмен. Полкпа батальонра халех çыхăну пулассине кĕтсе тăнă.

— Юлташ взвод командирĕ,—ыйтнă Сухарев Филипповран,—малалла кайма ирĕк парăр мана,—тенĕ.

— Мана та,—ыйтнă красноармеец Наволокин.

— Аван! Ĕçлĕр, юлташсем!—тенĕ Филиппов. Хăйсемпе пĕрле катушкăсемпе кабельсем тата телефон аппаратне илсе, Сухаревпа Наволокин шурлăх урлă каçса пынă. Фашистсем связистсем çине пĕрмаях персе тăнă. Анчах апла пулин те, çак паттăрсем палăртса хунă срок тĕлне çыхăнăва йĕркелесе çитернĕ.

Пирĕн чаçсем тăшмана аркатса тăкнă, ăна сăртлă вырăнтан хўтерсе кăларнă.

* * *

Взвод командирĕ Кабаков связиста кабель илсе килме хушнă. Шурлăхран тытăнса йĕритавра курăнса выртакан хир тăрăх каймалла пулнă. Фашистсем связист çине калама çук вăйлăн пеме тытăннă.

Персе тăнине пăхмасăрах, пĕшкĕнсе Кабаков юлташ малаллах васканă. Сасартăках вăл, артиллерирен вăйлăн персе тăнă хушăрах, çул

çинче хамăр автомашина ларнине курах кайнă Машина патĕнче шофер темскер тăрмашнă.

— Мĕншĕн чарăнса тăтăн?—ыйтнă Кабаков шофертан.

— Горючи параканни пăсăлнă.

— Машину çине мĕн тиенĕ?

— Минăсем.

— Давай иксĕмĕр юсар,—тенĕ Кабаков.

Снаряд ванчăкĕсем шăхăрса тăнă хушăрах икĕ боец мотор мĕнле ĕçленине тĕрĕслеме пуçланă. Тăшман вут-хĕмĕ айĕнче, минăсем тиенĕ машина патĕнче вун-вунпилĕк минут тăрасси вилĕм умĕнче тăрассипе пĕрех пулнă. Кашни самантрах вилĕм пăвса илме пултарнă. Анчах апла пулсан та, Кабаковпа шофер хăрушлăха пăхмасăрах ĕçленĕ. Юлашкинчен машина тикĕссĕн кĕрлеме тытăннă. Шофер газ панă та, машина тăшман вут-хĕмĕ айĕнчен тапранса, йывăç тĕмĕсем хушшинче çухалнă.

Кабаков хăйĕн маршручĕпе малалла кайнă.

**Старший политрук А. ЗАМОФИН.**

*Редакцирен:* Çак очеркра асăннă взвод командирĕ Виктор Федорович Филиппов юлташ фронта тухса кайиччен Шупашкарти Пединститутра ĕçленĕ. Вăл паллă физкультурник пулнă.

★

## РАЗВЕДЧИК КАЛАВĔ

— Вырăнаçăр, ларăр меллĕн,
Каламах эппин кĕскен
Икураллă, йĕс хўреллĕ
Кашкăрсем тытни çинчен.—

— Итлĕр,—терĕ çамрăк каччă,—
Вăл пуçларĕ калавне
(Кĕç палаткă шăп-шăпланчĕ)—
Ку ĕç пулчĕ каçхине.

Ылттăн уйăх çутатмарĕ,
Чăмрĕ çăмăр пĕлĕтне;
Çăлтăрсем те курăнмарĕç,—
Сăрламарĕç кĕр каçне.

Эпĕ шăппăн çеç пыратăп,
Тинкеретĕп сăнаса;
Хырăмпа та шукалатăп,
Тăнн... итлеп пуçа пăрса.

Чăшăл-чашăл, вăшăл-вашăл...
Пĕр пек сасă таврара;

Мĕн сассийĕ? Мĕн ку? Кам вăл?...—
Çил çӳрет-мĕн катара.

Çил кăна-и, çил çеç мар-тăр
Çӳрет пулĕ халь унта,—
Ик уралла урнă кашкăр
Халĕ йышлă вăрманта.

— Сыхă пул,—тет чун-чĕремĕм,—
Шăппăн-шăппăн çеç иртсем...—
Чăн, кунта хаяр çĕленĕн
Шăвăнаççĕ фашистсем.

Эп çитеп те йăпшăнатăп
Сĕм вăрманăн хĕррине.
Пурпĕр,—тетĕп,—пурнăçлатăп
Хам комбатăн приказне.

Вăхăт, хыттăн ан вĕçсемччĕ,—
„Чĕлхе" кирлĕ çурçĕрччен.
Нимĕç, хăвăрт эс лексемччĕ,
Вĕçернеймĕн пĕр лексен.—

Вăхăт-вăхăт капланаççĕ
Шухăшсем ман пуçăмра,
Хăлхасем те янăраççĕ,
Сасă пур пек умăмра.

Тем çуттийĕ, вăйсăр çутă
Кĕç куратăп катара.
Асăрхавлă çăмăл утăм,
Эп кĕретĕп шаларах.

Лăч куклентĕм (а тен сисĕç),
Шăппăн шурăм малалла.
Ĕмĕт çунчĕ—пĕр фашисчĕ
Пурпĕр лекĕ ман алла.

Куртăм: ман умрах палаткă,
Сăмахлаççĕ хăйсемле.
Часовойĕ тăрать акă,
Кĕç вăл ӳкĕ месерле.

Шухăш вĕçрĕ пит те хыттăн:
Ĕçĕм сассăр пулмалла,
Шăппăн ут, сасартăк ыткăн
Чик е çап тăраймасла.

Сас тухать-тĕк—ĕç те сӳннĕ,
Тăшман пӳлĕ пур енчен,
Тен хам пӳ те кунтах тӳнĕ,
Ку ĕç пултăр шăп, чеен...

Çивĕч штыкăм, ман юлташăм,
Татрĕ кашкăр пурнăçне,—
Кĕлеткийĕ часовойăн
Ӳкрĕ нӳрлĕ çĕр çине.

—Вырăнтан та ан тапранăр!..—
Кĕтĕм, тăвăл пек, штаба,—
Нихăш нимĕн сас ан патăр!..—
Султăм эп гранатăпа.

Иккĕш яшт кăна çĕклерĕç
Кăпăк пек аллисене,

А теприйĕ итлемерĕ—
Ярса тытрĕ наганне.

Хăвăрт çиçрĕ çивĕч штыкăм,
Чаплă турĕ хăй ĕçне:
Пурнăç сÿнчĕ ирсĕр йыттăн...
Çав çеç кирлĕ вĕсене!..

Иккĕш хытрĕç чул юпанăн,
Юр пек шурчĕç хăраса,—
Куçĕсем те пит айванăн
Пăхкалаççĕ чарăлса.

Тĕлĕнетĕп—тонна пуснăн
Усăнаççĕ пуçĕсем.
Чĕтĕреççĕ хăрăк çулçăн
Чăх чĕреллĕ йĕкĕтсем.

Ик çăвар кĕç пăкăларăм,
Иккĕшин ик аллине
Çирĕп çыхрăм, çыхăларăм,
Илтĕм кирлĕ хутсене.

Утăр!—терĕм пĕрле çыхнă
Хамăн икĕ «маттура»,
Пăшала хам хытă тытнă,
Виççĕн тухрăмăр çула.

Каш кашларĕ сĕм вăрманĕ...
Çулĕ уçă çÿреме.
Çитересчĕ вăхăтра ман,
Тетĕп, икĕ „чĕлхене“.

Таврăнатăп ухатаçăн,
Савăнатăп ăшăмра—
Норма ик хут тулчĕ манăн,
Тытрăм икĕ кашкăра.

Чăшăл-чашăл, вăшăл-вашăл..
Тĕрлĕ сасă таврара.
Мĕн сассийĕ? Мĕн ку? Кам вăл?—
Çил çӳрет-мĕн катара.

Çил кăна-и,—çил çеç мар-тăр
Çӳрет пулĕ халь унта.
Çавăнпа куç йăлт сăнатăр,
Пур сас пултăр хăлхунта.

Ак сасартăк хаяр сасă:
—Тăр эс, кам унта килет?!—
Ăшăмра кулап хавассăн,—
Ан тапраннă пултăр!..—тет.

—Хамăр çын ку,—тетĕп эпĕ,
Ăнчĕ, тетĕп, ухата:
Икĕ кашкăр тытрăм, тетĕп,
Çын кĕмен сĕм вăрманта.

—Паттăр эс, Петров юлташăм,
Çитрĕн çур сехет малтан.—
Хирĕç тухрĕ ман комбатăм,
Хĕпĕртерĕ вăл чунтан.

Приказ чаплăн пурнăçланчĕ,
Илсе килтĕм ик „чĕлхе“

Мăннисем кĕçĕр çакланчĕç...
Илĕр штабăн портфельне.

Рапортларăм эп хавассăн,
Васкамасăр, хамăрла.
Тăшмансем сывлаççĕ ассăн,
Пăхкалаççĕ вăрăлла.

Ир çитсессĕн кар çĕкленчĕ
Вутлă тăвăл ахăрса.
Чăтаймарĕ—кĕç чĕтренчĕ,
Тăшман чакрĕ арканса.

Çакăнпа пĕтет калавăм,
Мĕн калас тата хушса.
Хушнине ялан мухтавлăн
Тума кирлĕ боеца.

* * *

Боецсем пит хисеплеççĕ
Паттăр çамрăк чăваша:
—Вăл разведчик пирĕн,—теççĕ,—
Тивĕç пысăк мухтава.

Сержант **ВЕН. ТУРТУШ.**

☆

## ХАРСĂР ЛЕТЧИК

Мăн Тукташри Тарас Павловăн ывăлĕ Петр Павлов Ураскилтри туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Унтан вăл Çĕмĕрле комбиначĕ çумĕнчи ФЗУ шкулне вĕренме кайнă. Квалификаци илнĕ хыççăн вăл комбинатра ĕçленĕ.

1938 çулта Петр Павлов действительнăй службăна Хĕрлĕ Çара кайнă. Служба срокне тултарнă хыççăн Хĕрлĕ Çара ĕмĕрлĕхех юлма кăмăл тунă. Халĕ вăл фронтра Германи фашизмне хирĕç çапăçать.

Старший сержант, стрелок-радист Павлов çинчен политрук Каунин юлташ фронтри хаçатсенчен пĕринче çапла çырать:

„Подразделени задани илнĕ. Самолетсем çăмăр пĕлĕчĕсенчен çӳле хăпарса, çитес çĕре пырса çитнĕ. Противник çине бомбăсем пăрахма панă заданине пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, самолетсем каялла çаврăннă. Çĕр çинче белофинсен çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ эшелонĕсен ишĕлчĕкĕсем, çунакан объектсем курăннă. Каялла таврăнакан сталинла соколсен хăюллă звени çине фашистсен „Мессершмидт—109“ йышши истебителĕсен икĕ

звени пырса тапăннă. Советăн хăюллă летчикĕсем фашистсен атакине хăйсен çирĕп стройĕпе тата хаяр вутçулăмĕпе кĕтсе илнĕ. Тăшман чăтса тăрайман, хăйĕн маневрне улăштарнă.

Противникăн истребителĕсем бомбардировщиксен паттăр экипажĕсем çине пилĕк хутчен пырса тапăннă. Акă пĕри Дуболазов лейтенантăн машини патне вăрттăн пынă, анчах унпа юнашарти машинăри стрелок-радист комсомолец Павлов юлташ фашист маневр тунине асăрхаса илнĕ. Павлов пулеметран пĕр черет кăларса янă, çавăн хыççăнах фашистла çăхан çĕр çине чул пек татăлса аннă.

Урса кайнă фашистсем совет самолечĕсем çине татах темиçе хутчен атака тума хăтланса пăхнă, анчах вĕсен атакисем ăнăçсăр пулнă. Пирĕн соколсем фашистсен икĕ самолетне стройран кăларнă. Тăшманăн ытти истребителĕсем каялла çаврăнса тарнă".

Павлов юлташ çапла калать:

—Мана Ленинпа Сталин комсомолĕ пăхса çитĕнтернĕ. Çакă аслă отечественнăй вăрçăра эпĕ тăшманăн вуншар самолечĕсене персе антарнипе кăна çырлахмăп, кирлĕ пулсан, эпĕ юлашки юн тумламĕ юлмиччен совет халăхĕшĕн, юратнă Сталиншăн, ирсĕр фашистсене хирĕç çапăçăп,—тет.

Петр Павлов хăйĕн тăванĕсем патне янă çырăвĕсенче пĕлтернĕ тăрăх, отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа июлĕн 14-мĕш тĕлне 10 боевой вĕçев туса, тăшмансене хирĕç çапăçнă.

Германи фашизмне хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре хӑюллӑхпа хастарлӑх кӑтартнӑшӑн СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑҫалхи июлӗн 22-мӗшӗнче кӑларнӑ Указпа старший сержант Петр Тарасович Павлов юлташа, Элӗк районӗнчи Мӑн Тукташ ҫыннине, Хӗрлӗ Ялав орденӗ парса наградӑланӑ.

Мӑн Тукташ колхозникӗсем хӑйсен ҫыннипе, отечественнӑй вӑрҫӑн паттӑрӗпе—орденоносец Петр Павловпа тивӗҫлипех мухтанаҫҫӗ. Вӗсем колхозра мӗнпур хастарлӑхпа ӗҫлесе, гитлерла бандӑна ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫре хамӑрӑн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара пулӑшса пыраҫҫӗ.

ИВ. МОСЕЕВ.

☆

## ГОСПИТАЛЬРЕ

Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем, фронт линине ҫирӗп тытса тӑрса, фашистсен танкӗсемпе мотоциклисчӗсене хирӗҫ хӑюллӑн тапаттӑррӑн ҫапӑҫрӗҫ. Пирӗн госпиталь те палӑртнӑ вырӑна ҫитрӗ. 40 минут иртнӗ-иртменех вӑл аманнисене пулӑшу пама хатӗрленсе ҫитрӗ.

Йӗри-тавра симӗс вӑрман.

Ҫамрӑк патриоткӑсем—медсестрасем кашни хӑйӗн вырӑнӗнче, вӗсем ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ.

Кӗтмен ҫӗртен тревога. Аманнисене пурне те окопа вырнаҫтараҫҫӗ. Хирург хӑйӗн ӗҫне пӑрахмасть, вӑл пысӑк тата йывӑр операци тӑвать. Пульӑсем шӑхӑрса иртеҫҫӗ, снаряд ванчӑкӗсем сирпӗнеҫҫӗ, хирург ҫав-ҫавах ӗҫлет...

Аманнисене тепӗр вырӑна куҫармалла. Машинӑсем малалла шӑваҫҫӗ. Вӗсен тӗлӗнче, сывлӑшра, фашистсен самолечӗ, вӑл санитарнӑй машинӑсем ҫине пеме тытӑнать. Анчах, нумаях перейместь, ун ҫине тӑхлан ҫӑмӑр ҫума тытӑнать. Хӑюллӑ сестрасем хӑраса тӑмаҫҫӗ, аманнисене малалла ӑсатаҫҫӗ.

Акă Б. сестра. Вăл фронта киличчен Горькинче пединститутра вĕреннĕ, çав вăхăтрах çар медицинин сестри званине илнĕ. Виçĕ талăк хушши пĕр куç хупмасăр тата канмасăр ĕçлерĕ. Канасси çинчен сахал шухăшлать, аманнă боецсене хăвăртрах пулăшасси—унăн пĕртенпĕр ĕмĕчĕ. Çавăн пекех, вата хирург К. юлташ та виççĕмĕш талăк ĕнтĕ канмасăр ĕçлет. Çав вăхăтрах вăл çамрăк хирургсене консультацисем парса нумай пулăшать.

Аманнисем медицина работникĕсен аллисене ăшшăн чăмăртаса нумайччен тав тăваççĕ, ăшшăн сывпуллашаççĕ.

* * *

Пирĕн чаçсем тăшмана С. юханшывĕ хĕррине хĕссе пычĕç. Н-ски полк сисмен çĕртен пырса çапрĕ, тăшман çухалса кайса каялла тарма тытăнчĕ. Çав вăхăтра разведчик Семен Поликарпов (Хĕрлĕ Çара киличчен Канашри вагонсем юсакан заводра ĕçленĕскер) тăшман тылĕнче пулнă. Вăл фашистсем çине вăйлă персе тăнă. Çав вăхăтра унăн сылтăм хулпуççине амантнă. Анчах вăл пăшала аларан пăрахман, çаплах хăюллăн çапăçнă. Иккĕмĕш хут аманнă хыççăн тин стройран тухнă.

Поликарпов юлташ инçетри госпитале каясшăн мар, кунтах юласшăн, сывалнă хыççăнах çапăçăва кĕме сывăхарах пуласшăн.

Военврач И. СТОЛЯРОВ.

*Действующи арми.*

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

Пирĕн взвод çула сыхласа тăма приказ илчĕ: фашистсен автоколоннине çав çулпа иртсе кайма чарса лартмалла.

Тул çутăлнă тĕле вăрман хĕрринче фашистсен автоколонни курăнчĕ. Машинăсем пирĕн тĕле çывхарса çитрĕç, пĕр машинăна ирттерсе ятăмăр. Унтан вăйлăн пеме тытăнтăмăр, фашистсем çине вутлă çăмăр çуса тăма пуçларĕ. Фашистсен офицерĕсем ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ, хыпаланса укрĕç, çухалса кайрĕç. Пĕр самантрах сакăр машина аркатса тăкрăмăр. Систермесĕр пырса çапнă пирки тарăхса урса кайнă фашистсем пирĕн çине пеме тытăнчĕç. Анчах, çав вăхăтра пирĕн тепĕр подразделени флангран пырса çапрĕ. Фашистсем хăйсен çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ машинисене тата вилнĕ салтакĕсене пăрахса каялла тарма пуçларĕç. Эпир чылай салтаксемпе офицерсене тыткăна илтĕмĕр.

Пирĕн красноармеецсем фашистсен икĕ ма-

шини ҫинче тĕрлĕ эрехсем нумай тупрĕҫ. Красноармеец Е. Антонов, пĕрре эрехсем ҫине, тепре тыткăна лекнĕ офицер ҫине пăхса ҫапла каларĕ:

„Эрехне хăйсем лектернĕ,
Хăйсене капкăн лектернĕ,"—терĕ.

**Красноармеец В. ТИХОНОВ.**

*Действующи арми.*

☆

## ПĔР ТАЛĂК ИРТСЕН...

Хаяр çапăçăвăн иккĕмĕш кунĕ. Кĕçĕн сержант К. Осипов юлташ (Элĕк районĕнчи Пизенер ялĕнчен) пилĕк боецпа пĕрле, командованин заданине пурнăçа кĕртнĕ чухне тăшмансен тылне лекнĕ. Чаçри юлташĕсем вĕсене тыткăна лекрĕç пулĕ, тесе шутланă.

Вăхăт çур талăк иртнĕ, Осипов юлташ çук. Пĕр талăк çитнĕ. Шăп пĕр талăк иртнĕ хыççăн, кĕçĕн сержант Осипов юлташ хăйĕн пилĕк боецĕпе пĕрле фронт линийĕ урлă каçса хамăр чаçе таврăнчĕ. Пирĕн маттур боецсем хăйсемпе пĕрле икĕ пулемет тата тăвата фашиста тытса килчĕç.

Хăюллă боецсене командовани тавтурĕ, вĕсем çинчен пĕтĕм чаçре мухтавлă хыпар сарăлчĕ.

**Лейтенант НИКИТИН.**
**Кĕçĕн лейтенант СОСИН.**
**Сержант МАКАРОВ.**

*Действующи арми.*

## ТĂВАН ЯЛЙЫШ!*

Пĕр уйăха яхăн ĕнтĕ эпĕ фронтра. Калас пулать, Совет çĕршывне хапсăнакан фашистсен вăйĕ хавшалса пырать, вĕсем пирĕн Хĕрлĕ Çар хăватлăн пырса çапнине тӳссе тăраймаççĕ. Уйрăмах пирĕн штыксенчен питĕ хăраççĕ, штыкпа çапăçасси патне çитсенех, пăрахса каялла тараççĕ. Çапăçу хирĕнче вилсе юлнă нимĕç салтакĕсем хушшинче ват çынсемпе çамрăк ачасем тĕл пулкалаççĕ. Çакă ĕнтĕ вĕсен вăйĕ хавшалса пыни çинчен калать. Гитлер ват çынсене тата çамрăк ачасене çара илме тытăннă.

Анчах, тăшманăн вăйĕ хавшалать пулсан та, вăл пĕтсе çитмен-ха. Тăшмана хирĕç малашне те вăйлăн çапăçмалла пулать, çапăçатпăр та.

Хĕрлĕ Çар фашистсене часрах çĕнтертĕр тесен, сирĕн Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса тăмалла. Тăван килйышсем, колхозниксем, колхоз производствинче пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлĕр...

**Н. КАПИТОНОВ.**

*Действующи арми.*

☆

---

*Ку çырăва кĕçĕн лейтенант Николай Капитонов хăй çуралса ӳснĕ ялне, Урапакассине (Етĕрне р.) янă.

## ХӐЮЛЛӐ ТА ПАТТӐР МЕДСЕСТРАСЕМ

Мельников юлташ командир пулса ертсе пыракан батальонри медсестрасем аманнӑ боецсене пулӑшу парас ҫӗрте хӑйсен хӑюллӑхӗпе паттӑрлӑхне кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хушшинче Чӑваш республикинчен килнӗ хӗрачасем те чылай.

Шупашкар больницинче ӗҫленӗ комсомолка Нина Яковлевна Елисеева юлташ вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчен тытӑнсах медсестра пулса ӗҫлет, вӑл фронтӑн малти линийӗсенче пулса боецсемпе командирсене пӗр ҫынна ҫеҫ мар ҫапӑҫу хирӗнчен илсе тухса пулӑшу панӑ, вӗсене вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ. Елисеева юлташ хӑйӗн пӗтӗм вӑйне, пӗлӳне боецсене часрах сыватас ӗҫе парать.

Ҫавӑн пекех, С. Ятманова тата Е. Димитриева юлташсем те ҫапӑҫу фронтӗнче хӑйсен тӳсӗмлӗхне тата хӑюллӑхӗпе паттӑрлӑхне кӑтартрӗҫ. Вӗсене командовани тав турӗ.

Военфельдшер В. ЗАЙЦЕВ.

*Действующи арми.*

☆

## ЛЕНИНЛА-СТАЛИНЛА КОМСОМОЛ ЯЧĔПЕ

Этемлĕхĕн чи хаяр тăшманне—Германи фашизмне хирĕç пыракан вăйлă çапăçусенче комсомолецсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Ленинла—Сталинла комсомол ретне кĕрекен красноармеецсен йышĕ кашни кунах ӳссе пырать, вĕсем çапăçăва комсомол ячĕпе кĕреççĕ.

Пирĕншĕн, комсомолецсемшĕн, тăван çĕршывран, Аслă Сталинран хакли урăх нимĕн те çук. Çавăнпа та эпир ирĕклĕхшĕн, тăван çĕршыв чысĕшĕн хамăрăн юлашки тумлам юн юлмиччен çапăçăпăр.

Тăван чăваш республикинчи çамрăксем, сире саламланипе пĕрлех, Хĕрлĕ Çар тылне куллен çирĕплетсе пыма, производствăра пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлеме чĕнетпĕр. Вăрçă ĕçне пикенсе вĕренĕр, кирек хăш вăхăтра та алла пăшал тытса, тăван çĕршыва хаяр тăшманран сыхласа хăварма хатĕр пулăр.

Красноармеец А. ИВАНОВ.

*Действующи арми.*

☆

## ТУПМАЛЛИ


Стр.

УМСĂМАХ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

*С. Трегуб.* Старший политрук Павлов . . . . . . . 5

*И. Моис.* Паттăр танкист . . . . . . . . . . . . . . . 13

*В. К. Джауль-Карпов.* Ман взводрисем . . . . . . 19

*Ал. Морсков.* Хăюллăх . . . . . . . . . . . . . . 23

*Ф. Уяр.* Кĕпер патĕнче . . . . . . . . . . . . . . 28

*Сергей Макаров.* Урхамахпа . . . . . . . . . . . 35

*А. Замофин.* Хăравсăр связистсем . . . . . . . . 40

*Вен. Туртуш.* Разведчик калавĕ . . . . . . . . 46

*Ив. Мосеев.* Харсăр летчик . . . . . . . . . . . . 52

*И. Столяров.* Госпитальре . . . . . . . . . . . . 55

*В. Тихонов.* Çул çинче . . . . . . . . . . . . . . 57

*Никитин, Сосин, Макаров.* Пĕр талăк иртсен . . . 59

*Н. Капитонов.* Тăван ялйыш . . . . . . . . . . 60

*В. Зайцев.* Хăюллă та паттăр медсестрасем . . . . 61

*А. Иванов.* Ленинла-Сталинла комсомол ячĕпе . . . 62


☆

Редактор **Стихван. Шавлы.**

---

Подп. к печ. 5-I-42 г. НТ 3
Объем 2,0 п. л. Зак. № 614
Тираж 3.000 экз.

---

Типография № 1 Упр. Изд. и полиграфии при СНК ЧАССР.
г. Чебоксары, ул. Володарского,
Дом печати.

Цена 1 руб.

БОГАТЫРИ

На чувашском языке

Госиздат ЧАСС 1942